манăн санăн пирĕн

Ç Е М Ь Е

ĕнер паян ыран

Майăн 15-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ

Çирĕплĕх – пĕр-пĕрне хисеплениннче

Юнкă ял тăрăхĕнче Апроськинсен çемйине чи туслă çемьесенчен пĕри тесе çирĕппĕнех калама пулать. Сергей Михайловичпа Людмила Николаевна 7 ача пăхса ӳстереççĕ. Кашни ачи ашшĕ-амăшне курса ĕçчен те тăрăшуллă çитĕнет. Мăшăр «Сеспель» предприятире вăй хурать. Кунпа пĕрлех пысăк хуçалăх тытса тăраççĕ Апроськинсем. «Ачасем пулăшнăран, ĕçе тиркесе тăманран пур çĕрте те ĕлкĕрме пулать», – тет Людмила Николаевна.

Пысăк ĕçе тытăниччен ашшĕпе амăшĕ пĕрпĕринпе тата ачисемпе канашлани, ĕçе тĕплĕн пурнăçлани, пĕрле канма пĕлни – çакă пĕтĕмпех йăлана кĕнĕ ĕнтĕ пысăк çемьере. Ашшĕпе амăшĕ пĕрпĕрне, ваттисене хисепленине туйса ӳснĕрен, ачисем те çапла пулма тăрăшаççĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

«... ÇЕМИЙĚРЕ лайăх пăхса усрăр: çемье вăл халăх чаракĕ, патшалăх чаракĕ. Çемье пурнăçĕ тĕлĕшпе ваттисем каланă сăмаха чăваш халăхĕ ялан тата хытă тытса тăнă. Çак пурлăха лайăх сыхласа пурăнăр. Çемьенĕн лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хӳтĕлесе тăрать. Килĕштерсе тĕреклĕ тăракан çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар. Ӳтĕре ясарпа ан варалăр, ӳсĕртекен, астаракан япаларан шикленĕр. Çемйĕре сыхă усрасан, ачăрсене чипер упраса пурăнсан, килĕштерсе лăпкă ĕçлесе пурăнма хăвăр валли тĕреклĕ чарак лартса хурăр...»

Иван Яковлевич Яковлев чăваш халăхне панă халалран.

Чуна уçни

Кукăр çул çине ан тăрăр

... Эпĕ япăх юлташсен ушкăнне лекнĕ чухне 9 класра вĕренеттĕмччĕ. Тĕрмерен кӳршĕ таврăнчĕ те хăйĕн «интереслĕ» калаçăвĕпе, чунне уçса панипе, унта юрланă юррисемпе мана тем хушăра тыткăна илчĕ. Çамрăк вăрă укçана пилĕк авса, тар юхтарса ĕçлесе илнин усси çукки çинчен тăтăшах сăмах пуçаратчĕ. «Ун пек ĕçленипе пуяймастăн», – тетчĕ.

Çапла вара пĕрремĕш хут эпĕ те «çĕрлехи сунара» тухрăм. Манăн юлташсем тĕрмерен таврăннă кӳршĕ каччи ертсе пынипе автомашинăсенчи магнитолăсене вăрланă вăхăтра «атасра» тăтăм. Вăрланă япаласене сутнă укçана эрне хушшинче ĕçсе яраттăмăр. Малалла – тата шаларах: пĕччен иртен-çӳренсенне каçпа кĕсье телефонĕсем вăрлама тытăнтăмăр. Кунта, паллах, вĕренӳ пирки шутламан та. Мана иккĕмĕш çула хăварчĕç.

Сентябрь уйăхĕнче пирĕн шкула уголовлă шыравра ĕçлекен опер хăйсен ĕçĕ пирки каласа пама килнĕччĕ. Ĕç пирки кăна та мар, пурнăç çинчен нумай калаçрĕ вăл. Çак тĕл пулу вăхăтĕнче манпа темĕн пулчĕ, пĕлместĕп. Каçса кайсах итлерĕм эпĕ милиционера. Куç умĕнче ку таранччен тăнă тăман пĕр самантрах сирĕлчĕ тейĕн. Ăстăн та самантрах улшăнчĕ пек. Эпĕ вара урăх пурнăç пуррине ăнланса илтĕм: суймалла мар кашни кун, тĕрмери хăма çине кайса выртассинчен те кашни кун, кашни çĕр хăрамалла мар. Тĕл пулу пĕтсен эпĕ çак милиционер патне пытăм. Манăн пурнăçра вăл эпĕ куçа-куçăн хирĕç тăрса калаçнă пĕрремĕш милиционер пулчĕ. Эпĕ вара хамăн ĕçсем çинчен юлташшăн пăшăрханнă пек каласа пĕлтертĕм. «Миçе çул кĕтет ăна?» – тесе те ыйтрăм. Опер вара эпĕ хам çинчен калани не тӳрех ăнланчĕ. «Кала эс ăна. Пĕтĕмĕшле режимпа пилĕк çул хатĕрленĕ санăн юлташу хăйне валли. Инçех мар вырăнсене яриччен вара çак ĕçе пăрахма кала ăна. Апла тумасан хăйĕн пурнăçĕ çине хĕрес лартма тивет унăн», – терĕ.

Çак сăмахсем мана витерчĕç... Эпĕ чăнах та усал ĕçе урăх каймарăм. Ĕненĕр, çак утăма тума питĕ йывăр пулчĕ: пĕрре лекнĕ ушкăнран мана кăларасшăн марччĕ. Нумай каласа тивĕ вĕсемпе, пĕр уйăх больницăра выртрăм. Çак хакпа пулсан та, малтанхи пурнăçпа сыв пуллашрăм.

Халь эпĕ аслă шкулăн студенчĕ, юриспруденцие шĕкĕлчетĕп. Тăваттăмĕш курсра ĕнтĕ. Манăн профессии милиции усă кӳрессе вара пĕрре те иккĕленместĕп, хам милицире ĕçлессине те халех курса тăратăп.

Çапла пурнăçа лайăх енне çавăрса хума пултараççĕ оперсемпе, следовательсемпе, прокурорсемпе, спецназовецсемпе...– пурнăç курнă чăн-чăн арçынсемпе – чуна уçса каласа тĕл пулусем.

Пурнăç кукăр-макăр çулпа кайма пуçласан, çамрăксем, вăхăтра ăнланса илме тăрăшăр, сумлă та чăн-чăн çынсемпе чуна уçса каласа май тупăр. Вĕсем сире çĕнĕрен тӳрĕ çул çине тăма пулăшаççех.

Роман С., студент.
«Щит и меч» хаçатран.

Ятлă çынсем

Çемье ăшшине упракан

Хĕрарăм – çемье ăшшине сыхлакан, ăна упракан. Çавăнпах хĕрарăмра чăтăмлăхĕ те, ырăлăхĕ те ытларах пулĕ. Çемье тĕрекĕ тени вара мăшăр пĕр тĕллевпе пĕрпĕрне ăнланса пурăннинче, ача-пăчана йĕркеллĕ пăхса ӳстернинче.

Нумай ачаллă çемьесем, сăлтавĕ чылай пулнăран, халĕ питĕ сахал. Малтан вара, 50-60-мĕш çулсенче, кашни çемье тенĕ пекех нумай ачаллисен шутне кĕнĕ. Акă Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Шарпаш ялĕнчи Сергеевсен пысăк çемйине те таврара пĕлмен çын çук. Зиновия Васильевнăпа Борис Сергеевич Сергеевсем 10 ача çуратса ӳстернĕ. Мĕн пысăкăш çемье! Ачасем пĕчĕк чухнехи йывăрлăх кайран пурпĕр кашнин пулăшăвĕпе, тимлĕхĕпе ылмашăнать.

Зиновия Васильевна паян килĕнче кĕçĕн ывăлĕн çемйипе пурăнать. (Мăшăрĕ çĕре кĕни тăххăрмĕш çул ĕнтĕ.) 1924 çулта Шаптак Турай ялĕнче вăтам хресчен çемйинче кун çути курнăскер, вăл паян та вăрвар, çирĕп, хавас кăмăллă.

Шкулта пĕр-икĕ çул çеç вĕренме тӳр килнĕ ăна, урăх кайма май пулман. Саккăрăн çитĕннĕ вĕсем. Хаяр вăрçă çулĕсенче самаях йывăр килнĕ. Ăшшĕ, 3 пиччĕшĕ вăрçа тухса кайнă, пĕр пиччĕшĕ вара каялла таврăнайман. Вăрçă вăхăтĕнче çамрăк хĕр кунне-çĕрне пĕлмесĕр колхоз уй-хирĕнче тăрмашнă. Горькинче торф кăларнă çĕрте ĕçленĕ. «Бригадăра вун иккĕн пулнă, пĕтĕмпе 5800 рабочи тетчĕç», – аса илет Зиновия Сергеевна. Çамрăкла ĕçре пиçĕхнĕрен ĕнтĕ вăл нихăçан та алă усса ларман.

1949 çулта çемье çавăраççĕ вĕсем. «Пĕчĕк пӳртрех 10 ача çитĕнтерсе çын тунă. Качча килнĕрен вара 3 пӳрт лартрăмăр», – хăйĕн пурнăçĕнчи тапхăрсене куç умне кăларать кинемей.

Пур ачи те çемьеллĕ, мăнукĕсем вара 74-ăн. Кĕçĕн мăнукĕсем çине пăхса та савăнмалла. 11 мăнукĕ вăхăтне кура çара кайса килнĕ. Ялта та, Шупашкарта та тĕрлĕ ĕçре вăй хураççĕ ачисем. Тăтăшах амăш килне килсе тăраççĕ.

Качча килнĕренпех Зиновия Васильевна ял хуçалăх ĕçĕнче тăрăшнă. 16 çул хушши – фермăра. Ĕç ветеранĕ вăл. «Ача амăшĕн мухтавĕ», «Ача амăшĕ героиня» тĕрлĕ степень орденĕсем, Амăшлăх медалĕ, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин юбилей медалĕсем – мĕн тĕрлĕ награда çук пуль унăн. Çакна пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерсе тивĕçнĕ вăл. Çăмăл пулман çав пурнăçĕ. Сакăр теçеткерен иртнĕ кинемей темĕн те курнă, темĕн те тӳссе ирттернĕ. Анчах паян та ĕçсĕр лармасть вăл: чăлха-алсиш нумай çыхать. Ĕлĕкрех чухне чылай пир, капăр çипсенчен çивиттисем ăсталаса тĕртнĕ.

Таврара тăрăшуллă та хисеплĕ çемье ятне илтнĕскерсем, Шарпашри Сергеевсем паян та çаплах. Зиновия Васильевнăн тĕслĕхĕпе ывăлĕпе кинĕ те, икĕ мăнукĕ те ĕçчен, тăрăшуллă.

Апрелĕн 12-мĕшĕнче çуралнă кунне паллă тунă кинемей малашлăхран ыррине кĕтет. Пурнăç хавхаланăвĕ вара ăна вăй-хал хуштăр.

З. ИВАНОВА,
Чуманкасси ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.

Сире пĕлме

Тӳрĕ сукмакпа – пурнăç тăршшĕпе

1993 çултанпа ООН Тĕп Ассамблейи çирĕплетнипе пĕтĕм тĕнчипех майăн 15-мĕшĕнче Çемье кунне паллă тăваççĕ. Хĕрӳ вырăнсенче пурăнакан, чухăнлăхран тата СПИДран инкек курнă çемьесене пулăшасси-пе çак кун уйрăмах тимлеççĕ.

Çемье яланах çыншăн, обществăшăн тĕп тĕрек пулнă. Çирĕп те нумай ачаллă çемьен сумне, ырă йăлисене паянхи пурнăçра çӳллĕрех шая хăпартма питĕ йывăр, паллах. Акă пирĕн районта та кăçалхи çул пуçламăшĕ тĕлне нумай ачаллă çемье пурĕ 442 пулнă, пĕтĕмĕшле вара 4596 çемье шутланнă. Патшалăх шайĕнче тĕрлĕ программăсем пурнăçа кĕрсе пыни, нумай ачаллă çемьесене тивĕçлĕ пулăшу пани ырăрах улшăнусем тума май парĕ тен.

Çĕнĕ çемье йĕркеленсе пурнăç сукмакĕпе тӳррĕн те илемлĕн утни ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнĕнче пулмалла. Çапла майпа хушăнса пыракан хисепе вара çемьен упрамалла, çухатмалла мар. Çемье çавăрнăранпа пĕр çулталăк çеç иртнĕ-и, вун çиччĕ-и е вăтăр пиллĕк – ял-йышра вара ырă ятлă пулни паха. Çакă йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла пурăнас кăмăла хăпартать, вăй-хал та хушать.

Çемье çавăрнă пĕрремĕш куна аса илсе çулран çул туй кунне уявлани çĕнĕрен те çĕнĕ çунат хушса пытăр.

Пĕрлешнĕренпе 1 çул – çитсă туй.
2 çул – çĕр мамăк (хлопок) туйĕ.
3 çул – сăран туй.
4 çул – ăвăс (воск) туй.
5 çул – йывăç туй.
6 çул çурă – цинк туй. Мăшăра çемьене те, цинк савăт-сапа пекех, çутатмалли çинчен аса илтереççĕ.
7 çул – пăхăр туй. Арăмĕпе упăшки пăхăр укçасемпе ылмашăнаççĕ. Çакă тăнăçлăха пĕлтерет.
8 çул – шăвăç (жестяная) туй. Тĕпелте усă курмалли хатĕр-хĕтĕр е йăлтăртатакан савăт-сапа парнелеççĕ.
9 çул – тăм савăт туйĕ.
10 çул – кĕл чечек туйĕ. Туйра свидетель пулнă çынсене хăнана чĕнеççĕ. Упăшки вара арăмне 11 кĕл чечек парнелет: 10 хĕрлĕ тĕслине – юрату палли, 1 шуррине – шанчăк палли.
15 çул – кантăк туй. Парнесем – кантăкран. Мăшăр хушшинчи хутшăнусем те кантăк пек таса пулнин палли.
20 çул – фарфор туй. Сĕтел çинче фарфор савăт-сапа пулмалла.
25 çул – кĕмĕл туй. Ылтăн çĕрĕпе юнашар кĕмĕл çĕрĕ тăхăнмалла.
30 çул – ĕнчĕ (жемчужная) туй.
35 çул – пир, пусма туй.
40 çул – рубин туй. Ылтăн çĕрĕ çине çак хаклă йышши чула вырнаçтараççĕ.
50 çул – ылтăн туй. Арăмĕпе упăшки пĕр-пĕрне çĕнĕ ылтăн çĕрĕ парнелеççĕ.
60 çул – бриллиант туй.
65 çул – тимĕр туй.
75 çул – патша кăшăлĕн (коронная) туйĕ.

Тĕпелте

Симĕс кукăль

Чуста: çăнăх, çăмарта, турăх, тăвар, кăшт сахăр, чустана кăпăшкалатакан порошок (разрыхлитель). Чустана ытлашши хытă çăрмалла мар.

Кукăль ăшĕ: вĕлтрене, кăшкар утине, шӳтернĕ кукша пуç (одуванчик) курăкне вĕтетмелле, кăшт рис тата пĕçернĕ çăмарта хушма юрать. Тăвар, пăрăç сапмалла, ăшаланă сухан хушмалла. Кукăль питĕ тутлă пулать. Кукăль ăшне симĕс сухан, ыхра яни те пăсмасть. Какай юрататăр пулсан, кукăль ăшне фарш хушăр.

Симĕс сыр

Укроп, ыхра, петрушка вĕтетĕр. Килте хатĕрленĕ сырпа хутăштарăр. Ешĕл çимĕçпе сыра пĕр пек виçепе илĕр. Сыра ыхра çулçи хушма юрать.